Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

# КАПКӐН

18-мӗш № 1928-мӗш ҫ.

— 4-мӗш ҫул тухать. —

## Кӗпер патӗнче.



— Мӗн кунта кӗтсе тӑраттӑр?
— Ваҫли Хветӑрӗ лаша кӳлнӗччӗ. Лаша ура хуҫассине кӗтсе тӑратпӑр.

# Хупахри йӳнелсен епӗр хамӑр та...

Нӗркеҫ (Патӗрйел р.) халӑхӗ самокон йухтарса халтан кайнӑ. Ывӑнса ҫитнӗ пӗтӗмпех. Вӗсемпе кӗрешме килекенсем килсе пуҫ урлӑ шаплаттарасса, йе ура хурса ӳкерессе кӑна кӗтеҫҫӗ. Кӗрешме килекенсем ҫук. Нӗркеҫсен ниҫта хурайми вӑйӗ ахалех пӗтет.

Самоконккӑ йухат̆. Ђетвӗрг хыҫҫӑн ђетвӗрт тулат̆. Самокон пӑраки касмӑкра пӑх-пах туса йӳҫет, татах йухтармалла. Татах ӗҫмелле. Иурла!..

— Ех, пирӗн ҫук штођ! те йурӑ хыҫҫӑн.

Иурлат̆ нӗркеҫ халӑхӗ. Хутран-ситрен пӗр-пӗрин сӑмсине такана пек каҫӑртса йаравансем те пур (кӗрешекен ҫук та, вӑйа ӑҫта хурас?), сӗрӗм тивнӗ пек, анкӑ-минкӗ ҫӳрекенсем те пур.

— Ах, килсе кӗрешђӗрђӗ пӗрех хут. Ма кӗрешмеҫҫӗ-ши пирӗнпе? текенсем те пур.

Анђах, вӑрттӑн ҫӗрте, тӗттӗм каҫпа, трупа тӑрӑх самоконккӑ пӑнт̆тик-пӑнт̆тик, пӑнт̆тик, тӑват̆. Ђетвӗрт хыҫҫӑн ђетвӗрт тулат̆. Ҫӗнӗ пӑраки пӑх-пах йӳҫет. Иухтараҫҫӗ те, сутаҫҫӗ. Илекенсем йурлаҫҫӗ.

— И-ех!.. ҫук штођ!

* * *

Шупашкартан ђиркуђар хыҫҫӑн ђиркуђар килет района. Район—йалсоветне ђиркуђарпа антӑхтарат̆: кӗрешӗр самоконщђӗксемпе, теҫҫӗ. Иалсоветђӗ ђиркуђар ҫине ресођутси хурат̆: «Кӗрешес».

Ресођутсиллӗ кӗрешӳ хыҫҫӑн, Нӗркеҫ йалсоветђӗ пуху тума шут тытат̆. Пуху пуҫтарӑнђӗ: 70 арҫын, 3 хӗрарӑм. Иалсовет претҫетаттӗлӗ токлата шӑрантарса илђӗ. Хӗртрӗ кӑна токлата. Самоконккӑ халӑха мӗнле сийен кӳнине, прохвессӑр пек, тӗпӗн-йӗрӗн ӑнлантарса пађӗ. Токлат хыҫҫӑн пуху претҫетаттӗлӗ:

— Келӗшеттӗри Ђумаккӑв йулташ сӑмахӗпе, тесе ыйтрӗ пухуран.

— Килӗщетпӗр, терӗ пуху.

— Мӗнле претлошени пур?

Ресођутси ҫырма авторитеттлӑ комиҫҫи суйламасӑрах пуху ҫапла ресођутси йышӑнђӗ:

| Слушали: | Постановили: |
| --- | --- |
| 2. Сӑмакунпа кӗрешесси. Труписене ирӗклӗн парасси. М. Ђумакков калат̆. | Хупахра сутакан ерех йӳнелсен, епӗр самоконкӑна йухтарма хамӑр та йухтармастпӑр, |

тесе, йапӑр-йапӑр ҫырса хуђӗҫ. (Нӗркеҫ йалӗнђе йанварӗн 17-мӗшӗнђе кӑҫал пулнӑ пухун 14-мӗш №-лӑ протокколӗ).

Ку пуху хыҫҫӑн йалсоветђӗ района «кӗрешни» ҫинђен ҫыру йађӗ пуђ, «к ӗ р е ш р ӗ м» терӗ пуђ.

Кӗрешессе, ђанахах кӗрешнӗ ӗнтӗ вӑл: хӑравҫӑрах ҫынсем хӑйсен труписене йалсоветне хӑйсемех леҫсе панӑђђӗ хӗлле. 40—50 трупа сакайӗнђе ђакӑртатса выртађђӗҫ. Анђах, ҫакӑн пек ресођутси йышӑнни ӗҫе ҫӗтӗк шлепкепе хупласа хунӑ пек хупласах хуђӗ.

* * *

— Хупахра сугакан ерех йӳнелниха?—ыйтаҫҫӗ труписене пытарса хӑварнисем.

— Иӳнелменха.

— Апла пулсан йухтарас.

Ђӳређене сӑкман караҫҫӗ те, трупа тӑрӑх пӑнт̆леттереҫҫӗ кӑна. Иухат̆ самокон.

— Хупах ереки йӳнелмени?

— Ҫукха.

— Иухтарас апла пулсан.

Сакайӗнђе прака йӳҫет. Иалсоветђӗ ресођутси йышӑннӑ та, «кӗрешрӗ» пулђӗ. Хупахри ерех йӳнелмест. Ма хӑвалас мар самоконкка?

Хӑвалӑпӑр. Сутатпӑр та илетпӗр. Унган хытӑ йурлатпӑр:

— Ех-и и! Ҫук штођ!—тетпӗр вара кайран.

Шалђа тулиђђен, 100 тенкӗ штрав хуриђђен, тӗрмене кайма ҫул тупиђђен йухтарасха...

— И-ех!.. Ҫуким пирӗн! Пђеват̆ саккун ҫине, теҫҫӗ.

ЕТМЕН.

# Ҫӗр валеҫнӗ хыҫҫӑн.



— Иаккӑп кум! Мӗн ҫӗмере кукӑр ҫуртасемпеле айкашса ларатӑн есӗ уйрах.
— Ана ҫине кукӑр ҫурта лартап.
— Мӗншӗн тата?
— Ҫак ман тислӗк ани лекиӗ ҫынни кукӑрлса вилтӗр, тетӗп.

**ПУТЕНЕ.**

# Кӗскипе вырӑмми.

Уҫрештенийе ҫӗнӗ пуҫлӑх килнӗ кун Каврилӑв киле пит салхуланса таврӑннӑ. Арӑмӗпе те калаҫман, ачисемпе те сӑмах хушман. Савнӑ арӑмӗ йӑвашшӑн апат ҫийетни тесе ыйтсассӑн:

— Ҫийес килмест, тесе лаплаттарса хунӑ.

— Ҫисем, ҫи, ҫимесен ырханланма пултаратӑн. Ырханлансан ҫире йерӗн. Ҫире йерсен вилсе кайӑн. Вилсессӗн ачусем тӑлӑха йулӗҫ, тесе гархасланӑ арӑмӗ.

— Ну, йурӗ. Сирӗншӗн ҫийӗпи антах, тенӗ вара Каврилӑв парӑннӑ сасӑпа.

— Уҫрештенирен кӑларса йамарӗҫ пулӗҫке, тенӗ арӑмӗ упӑшки лӑплансан.

— Кӑларман та, кӑлараҫҫех. Ҫӗнӗ пуҫлӑх пит пӗҫӗкӗскер. Ун ҫине мана ҫӳлтен пӑхма тивет. Ҫавӑнпа хӑйӗнҫен вӑрӑм пулнӑшӑн йуратас ҫук вӑл мана, халӗ те кукленерех ҫӳрерӗм те... тенӗ.

### Ирӗкӗн мар.

— Иванов! Ӗнер есӗ саҫаттинҫен ху ирӗккӗн тухса кайнӑҫке?

— Ҫук, йулташ саветуйушҫи, хама ирӗкӗн мар. Ман хваттерпе кӳрӗшре пурнакан Туҫӑ килме каланӑҫҫӗ те мана...

С—в.

# Лартрӗ.

## Ҫерҫи сӑмсинҫен те кӗскерех комети.

**Вылҫакансем**: 1) Пакров, 25 ҫулхи пӗҫҫен ҫын. 2) Шертешниккӑв, 57 ҫулхи йал пуйанӗ. 3) Сутйе. 4) Проккурор. 5) Сашҫитнӗк. 6) Ҫыруҫӑ.

### 1-МӖШ КАРТТИНӐ.

*(Ҫаршав уҫӑлсан пӗҫҫен ларакан сашҫитнӗк патне Пакров кӗрет).*

Пакров. Страствуйтӗ.

Сашҫитнӗк. Сторовӑ... Лар ҫакӑнта *(пукан парать).*

Пакров *(ларать).* Епӗ пайан питӗ вашӑ ӗҫпе килтӗм сан пата. Пулӑшу парас темӗрши мана?

Сашҫитнӗк. Пулӑшмалла пулсан пулӑшас... Мӗнле ӗҫпе калаха?

Пакров. Акӑ мӗнле ӗҫпе: икӗ ҫул ҫитет ӗнтӗ, епӗ хамӑр йалти Шертешник Васлинҫен пӳрт илни. 350 тенке илсеҫҫӗ. Ҫав укҫана вӑл манран ыйтрӗ, ыйтрӗ те, кайран сута паҫӗ. Ыран сут пулать. Мӗнле ҫав укҫана хамра пулмалла ҫӑлса хӑварас?

Сашҫитнӗк. Апла пулсан итле... Анҫах хӑвӑнне хӑв пӗлӗн.

Пакров. Ҫипер ҫӑлӑнса йулсан 50 тенкӗ шалкӑ марҫҫӗ...

Сашҫитнӗк. Есӗ ыран сута кайсассӑн, 350 тесен, есӗ нутӑк штошӑ те, санӑн ӑна тӳлес пулать тесен, есӗ ну-у-у?!. тесе тӑр. Вара сана ухмах ҫын тесе каҫараҫҫӗ.

Пакров. Спаҫҫипӑ сире кӑнашкал ӑс панӑшӑн, халӗ ӗнтӗ кайамха, сывӑ пул!..

*Ҫаршав.*

### 2-МӖШ КАРТТИНӐ.

### Сут.

*(Ҫаршав уҫӑлнӑ ҫух лараҫҫӗ: сутйе, сашҫитнӗк, проккурор, тата ҫыруҫӑ).*

Сутйе. Айӑпланакан Пакров, тӗрӗссипе пӗр суймасӑр «хамӑн айапа йышӑнатӑп» тесе ҫакӑнта килсе алӑ пус.

Пакров. Нутӑк штошӑ...

Сутйе. Ӗҫе тытса ан тӑр, кил хӑвӑртрах.

Пакров. Ну-у-у-у?!.

Сутйе. Есӗ Шертешниккӑвран 350 тенкӗлӗх пӳрт илтӗни?

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Сутйе. Илнӗ пулсан тӳлес пулать...

Пакров. Ну-у-у?!.

Сутйе. Кӑмӑллӑнах тӳлетни?

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Сутйе. Кӑмӑллӑ тӳлесен сут та тумастпӑр, халех киле кайатпӑр.

Пакров. Ну-у-у-у?!.

Сутйе. Асту, Пакров, есӗ кун пек аташса тӑрсан, сана халех кирпӗҫӗ шутлама ӑсататпӑр, ҫитменнипе мӗн пур пурлӑхна сутса Шертешниккӑва паратпӑр.

Пакров. Нутӑк штошӗ?!.

Сутйе. Илсе кайӑр Пакрова, хупӑр, ӳлӗмрен пирӗнтен ан мӑшкӑлатӑр.

Пакров. Ну-у-у-у?!.

Саҫҫетаттӗл. Мана сӑмах парӑрха?

Сутйе. Халӗ саҫҫетаттӗле сӑмах.

Саҫҫетаттӗл. Итлеха, Шертешниккӑв, есӗ Пакрова пӳрт сутни нумай пулать?

Шертешниккӑв. 2 ҫул ҫитет ӗнтӗ.

Саҫҫетаттӗл. Пакров сирӗн патран инҫе пурӑнать, тата мӗнле ҫын вӑл?

Шертешниккӑв. Епӗ ӑна паркаланӑ та, вӑл укҫине тунмасҫӗ... Ҫавӑнпа пушалӑстӑ пӳртна кӗтесле сут, тесе тархасларӗ те, хамӑр йалти шанҫӑклӑ ҫын тесе хӗрхенсе патӑм. Халӗ сутлашмалла пулҫӗ.

Саҫҫетаттӗл. Санӑн ҫветиттӗл пури?

Шертешниккӑв. Нихӑҫан суймарӑн, парать пулӗ тесе, ҫветиттӗл шырама шухӑшламарӑм.

Сашҫитнӗк. Парӑрха мана сӑмах!

Сутйе. Халӗ сашҫитнӗке сӑмах...

Сашҫитнӗк. Шертешниккӑв Пакрова укҫа те панӑ, те паман—епӗр ӑна пӗлместпӗр, унӑн ҫветиттӗл ҫук. Тен вӑл кураймасӑр йури сута парса кутӑнлашасшӑн пулнӑ. Тата Пакрова тӗплӗ, ӑслӑ теме те йавӑр, мӗншӗн тесен ӑна мӗн ҫул ыйтусем патӑмӑр, пӗрине те хирӗҫ каламарӗ, текех пӗр сӑмахсемпе «нутӑк» текелесе сӳткеленсе тӑҫӗ. Ҫипер тӑнлӑ ҫын пулсан ку таравҫҫен мӗн те пулин калатех. Манӑн шутпа сут туса тӑмалли те ҫук. Темӗн ҫул ыйтсан та, нимӗн те пӗлместпӗр, вӑхӑта иртерни ҫех. Кӑнашкал ҫынтан нимӗн шырама та епӗр пултарайместпӗр,

çавӑнпа та епӗ Пакрова касарма ыйтатӑп. Халӗ ӗнтӗ пӗтертӗм (*ларат*).

Айӑплакан. Пакров й., илнӗ укçана хӑçан тӳлеме пулатӑн?

Пакров. Нутӑк штошӑ?..

Айӑплакан. Асту, Пакров, кӑмӑллӑ тӳлеме-ен, хӑвна йӑвӑр килет.

Пакров. Ну-у-у-у?..

Айӑплакан. Пӑрах вӑл сӑмахсене?

Пакров. Нутӑк штошӑ! .

Айӑплакан. Текех ан мӑшкӑла пирӗнтен... аҫа вӑйӑйи мар вӗт.

Пакров. Ну-у-у у?!.

Айӑплакан. Тата пирӗнтен кулма пӑрахмастӑни?

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Саççетаттӗл. Иулташсем, Пакров ҫипер тӑнлӑ çын мар, ӑна темҫул ыйту парса та, нимӗн те пӗлеймӗпӗр. Саккун пире ухмах çынна сут тума хушмасӑ, çавӑнпа та сут пӗтерме ыйтатӑп.

Сутйе. Хаҫ калана сӑмахсем пурте тӗрӗс. Пирӗн текех тӑрсан та нимӗн те тухас çук, халӗ сута пӗтеретпӗр.

*Ҫаршав.*

З-МӖШ КАРТТИНА.

(*Сашҫитнӗк килӗнҫе*).

Сашҫитнӗк. Мӗнлеха ӗнер калавӑ сӑмахсене манман пуҫха?

Пакров. Нутӑк штошӑ?..

Сашҫ. Пӑрах ӗнтӗ вӑл привыҫкӑна.

Пакров. Ну-у-у-у?!.

Сашҫ. Ан аташ текех, йӗркеллӗ пул.

Пакров. Нутӑк штошӑ?..

Сашҫ. Пӑрах мӑшкӑлама!

Пакров. Н-у-у-у?

Сашҫ. 50 тенкӗ паратӑп терӗн те, пайан маиса та карӑни?

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Сашҫ. 350 тенкӗ çӑлса хӑвартӑм та, халӗ епӗ кирлӗ пулмарӑм.

Пакров. Ну-у-у?!

Сашҫ. Неушли ес манран нимӗн ыррине те курмарӑн?

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Сашҫ. Халӗ те есӗ çаплах ухмаха перетни?..

Пакров Ну-у-у-у?..

Сашҫ. Если так, то в таком случае катись к чорту!

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Сашҫ. Не мешай мне, оставь пожалуйста в покое.

Пакров. Ну-у-у-у?!.

Сашҫ Сказано уходи ..

Пакров. Нутӑк штошӑ?!.

Сашҫ. Ты не слушаешь?

Пакров. Ну-у-у-у?..

Сашҫ. Уходи, мерзавец, жулик ..

Пакров. Ну?! (*Ӗкҫерен тытса кӑларса йарат. Пакров „нутӑк штошӑ“ тесе тухса кайат*).

*Ҫаршав.*

С. ÇПИРИТОНАВ.

## Турайри карттин.




**Шӑмӑ йуратакан вуламалли çурт пуçлӑхӗ.**

# Мускав хăни.

Кам та пулсан курорта йе йала кайнипе пĕлместĕни есĕ, терĕ мана пуд̧варта тĕл пулса Шупашкарта практеккăра пурăнакан пĕр студент.

— Унăн толшнăçне вăхăтлăха йышăнса йулас тетĕни мĕн, терĕм епĕ студент шухăшне тӳрех ăнласа илеймесĕр.

— Çук мана толшнăç тавраш кирлĕ мар... Ну, калаха, д̧асрах, кала!..

— Аха, есĕ упăшкисĕр йулнă арăмсене шыратăн пулиç... Апла пулсан тӳрех пирĕн пухкалттĕр арăмĕ патне вĕçтер, вăл ĕнер çех упăшкине Шафранăва кĕсре сĕтĕ кӳпме ăсатса йад̧ĕ, терĕм студентăн кăскăн шухăшне пусарас тесе.

— Çук, çук... Мĕн шуйттанĕ тума кирлĕ мана сирĕн пухкалттĕр арăмĕ... Мана хваттер кирлĕ, илтрĕни—хваттер тетĕп, хва-аттер...

— Ах, хваттер!.. Апла пулсан пирĕн хушăри калаçу кĕске пулĕ, епĕ хам та пĕр йулташ краваттĕн сулахай хĕррин д̧е çех çывăрса пурăнатăп...

— Сылтăм йеве пушахи вара?..— хĕпĕртерĕ студент.

— Сылтăм йенд̧е йулташ хăй çывăрать...

— Ну аплатăк сыв пул!..

Студент кӳçĕсене сухан çинĕ хыççăнхи пек хĕстерсе илд̧ĕ те манран уйăрлса кайрĕ.

Тепĕр ернерен столовайра тĕл пултăмăр.

— Ну кам хваттерĕнд̧е пурăнатăн? терĕм епĕ вим сăмах хушид̧д̧ен.

— Ăçта пурăнасси... Хăш каç ӳд̧ рештенире, хăш каç пристăн̧ çинд̧е. Хад̧ хамăр пуçлăх хваттерĕнд̧е пурăнатăп, анд̧ах вăл кĕçех таварнать пулас... Халĕ те пулсан пĕлместĕни есĕ кам хваттерĕ пушанса йулнине?— аптратма пуçларĕ каллех.

— Халĕ пирĕн çекреттар хваттерне кайса пурăнма пултаратăн, вăл ыран килйышĕпех йала кайать...

— Мерççи сана, йоллох спаççипă... Айга, хваттер тупăвнă çинд̧ен пĕрер путăлкка пушатар—хĕпĕртесе кайрĕ студент.

Виççĕмĕш хут ĕнер пристăнд̧та тĕл пултăмăр. Вăл унта Мускава каймаллах хатĕрленесе авнă.

— Хваттер çук пирки хыпалансах кайас терĕни мĕн?—тесе ыйтрăм хайхискерĕнд̧ен.

— Ах, ан та кала, ад̧а!..

— Мĕн пулнă çак сана, санăн сăву та шапшурах, каласа пэрсам д̧асрах...

— Айгаха еппин, ав, çавăнта, çынсем çукрах çĕрелле...

Улахрах вырăн шыраса тупса лартăмăр та, студент мана çакна каласа кăтартрĕ:

— Манăн кăçал май пулмарĕ, ад̧а... Хваттершĕн аптрасах кайман епĕ йулашки вăхăтра, сакăр хваттер тупнă çинд̧е тăххăрăмĕшне тупма—мĕн вăл!..

Сирĕн çекреттар таварнсан епĕ хамăр çекреттар хваттерне карăм. Малтанах унта никам та çукд̧ĕ. Пĕр ерне ерен кĕтмен çĕртех çекреттар арăмĕ таврăнд̧ĕ. Епĕ çав кунах урăх çĕре куçас тенĕд̧д̧ĕ, анд̧ах тем мурĕ тытса д̧ард̧ĕи тен. Тӳррипех каласан—çекреттар арăмĕн хăмăр куçĕсем д̧ард̧ĕç пулас. Пĕр каçлăха йулса пăхам, турă д̧арсан усал çулăхмĕ, терĕм хамах. Йулташ... Ну, малалла каламасăрах паллă. Виçĕмкун хăй таврăнд̧ĕ...

— Çавăншăнах каймалла пулд̧ĕ вара, терĕм студент сăмаххине пӳлсе.

— Итле, итлесен хăвах пĕлĕн.. Упăшкине пăрахрĕ вĕт, мур хĕрарăмĕ, киле те кĕрмерĕ... Санран уйăрлмастăп, санпа пĕрле Мускава пыратăп, тесе аптратма пуçларĕ мана... Пĕтрĕм вĕт, йулташ, пĕтрĕм... Мускавра манăн хамăн арăм пур вĕт...—кăшт çех йĕрмест студент.

Çак вăхăтра пристăн̧ хĕрĕнд̧е хашласа ларакан прахут виççĕмĕш çвисток пад̧ĕ.

— Ну, сывпул, пушалстă халĕ каласни çинд̧ен сăмах сарса ан çӳре.

Студент йапалисене пуçтарса йăтрĕ те хыпăнса прахут çине кĕрсе кайрĕ. Кĕç пăрахут та хайарăн хашкаса пристăнд̧рен уйăрăлма пуçларĕ.

— Тăхтăрха, тăхтăр, ан йарăр пăрахутна, тесе çухăрса йад̧ĕ çак сехетре сăрт çинд̧ен д̧упса анакан пĕр хĕрарăм. Хăй вăл икĕ çытар пид̧ĕ тулли йапаласем йăтнă. Анд̧ах вăл пристăн̧ çине д̧упса çитид̧д̧ен прахут самайах уйăрлса кайрĕ.

— Волоть̆ă, Волоть̆ă, тетĕп, шуйттан!..

# Апат çиме кил!

Ҫăвашсен, хирте тырă вырнă ҫухне апат çиме ларсан, кама курнă ăна апат çиме ҫěнес йăла пур...

Атте, анне, икě пиҫҫе, асанне, акай (аппа), епě—тырă выратпăр. Анне апатпа паçăрах килнě, анҫах атте апата ларасса шутламасť те: ыттисем никам та ларман! Тěлěнмелле: тен ыттисем ирех çисе тухнă пулě ана çине, вěсене пăх та хырăму пěрěнсе лараҫҫенех выçă ěçле! Акă, катари анасем çинҫе çурлисене йăлтăртаттарса кěлтесем çине касса, тыр выракансем ураписем патнелле уга пуçларěç. Пирěпе йунашар Лаван Иукурěсем выраççě. Вěсем йурлă çынсем. Вěсем анисем çине те çуран çўреççě. Çурҫě те вěсен тăррисăр. Вěсем апат çиме лармаççě. Вěсене кура атте те хăнк та сикмест..

— Ларас, çынсем лараççě!—тет анне.

— Лара-а-а-с! кěрлетпěр епěр—пěҫěкскерсем.

— Ара, Лавунсем лармаççě-ěçке!—тет атте.

Лавунсем лармаççě пулсан та, епěр анратнине ҫăтаймасăр атте çурлине кěлте çине каҫ! тутарса лартаť те, урапа патнелле утаť. Епěр кěрлесе ҫупса çитсе ларатпăр.

— Çěр-амăш, тур-амăш, ваттисем-вěттисем, килěрех апат çиме!—тесе кěл-тăваť атте. Унҫҫен те пулмасť, мăн çул çинҫе çавра çил пěтěрěнме тапратаť те, кěлте тěмěсене çěклесе тўрех пирěн çине килсе пăрахаť. Пирěн йашка ҫěресси ўкěнет кайаť, аттен кěпине çавра çил тавăрса кайаť, епěр хăрава ўкнипе урапа айнелле аран упаленсе кěрсе кайатпăр.

— Акă, ҫěнтěн апат çиме такамсене!—тет асанне тусанланса йулнă çăкăра вěрсе тасатанçи пулса.

— Миçе калавă, çав, апат çиме ларсан ҫěлхе ан сур тесе!—тарăхаť анне.

Аттен пиҫě-куçě хуп-хура. Иашка аттен кěпи аркине йěпетнě те, çавра çил кěпине тавăрсан, унăн пиҫě пылҫăкпа сапланнă йулнă. Нимěн ҫěнмесěр, вăл питне куçне тасаткаларě те, тип çăкăра тытса ларҫě. Епěр те пěрер ҫěл çавăрса илтěмěр.

— Васпути, турапăрах. Лавунсем, килěр апат çиме!—терě атте. Лемсем куна кěтсех тăнă пек, çурлисене лаҫ-та-лаҫ пăрахкаларěç те, пирěн пата ларҫěç. Епěр ҫăл-ҫал пăхкала йултămăр: виçě Лавун епěр çăвар карма ěлкěриҫҫенех пирěн çăкăра вакласа та илҫěç. Иккен, вěсен çимелли пěтнě те, ěнертенпе ыраш пуҫаххисене шěкěлҫесе пурăнкаланă. Атте ҫěнсен вěсем питě хěпěртесе епěр çийес çăкăра нипоҫҫом кўпсе кайрěç.

Çапла выçă хăварҫě пире атте авалхи йăласен кăмăлне.

Унтанпа вăл никама та апат çиме ҫěнмест. Ш. Л.

---

Кам çине хăвартăн мана есě... и-ии-ууу...—йěрсе-йаҫě хайхи хěрарăм.

Епě пристăҥ çинҫен тухса сăрт çинелле улăхрăм. Çекреттар арăмě пристăҥ çинҫех йěрсе йулҫě...

Атăлăн ирхи хěвелпе йарăмланса йухакан хумěсем тăвалла кайакан прахута хăйсене йенелле туртнă пирки, прахут ман куç умěнҫен ҫасах çухалаймарě. Шыв йухăмне хирěç ишме хайарăн сывлакан прахута та çăмăл мар иккен... РОНИ.

---

### Хатěрленеççě.



— Сирěн йалта присăв кампанине лайăх хатěрленесěи?

— Питě вăйлă хатěрленеççě. Сăра, ерех килěренех йухтараççě.

Вăтали Василис.




### Ку тухтăра справккă сĕтелли пуçлăхĕ тумалла.

— Тула тухас килет. Тухма юраҭи?

— Иурамасҭ. Малтан тула тухас килни çинҭен йалĕçтăвкомран хут илсе кил, тенĕ пĕр уҭитлĕ йумахра.

Аслăзатĕрйелĕнҭи тухтăр Фатоссăвран сывлăх çинҭен ĕнентерекен хут ыйтсан: сана ун пек хут кирли çинҭен справккă илсе кил, унсăрăн памастăп, тесе йараҭ, тет (К. В).

Ҭирлĕске сирĕн тухтăр. Пÿрократтисăм ҭирĕпе ҭирленĕ. Ма тыгаççĕха ҭирлĕскере ăна пуԓнитсара?

### Ăйăр ҭыхи.

— Сирĕн ăйăр ҭыха туса паҭи? тесе ыйтаççĕ Упрам Таниԓран Мăштавăш çыннисем.

Кăçал ийунĕн 24-мĕшĕнҭе 2-мĕш"лашта уҭаскинҭе (Шупаш р.) лашасене уҭҭот пулҭĕ. Мăштавăшри Упрам Таниԓă ăйрине выҭăх тухтăрĕ кĕсре тесе картăҭкă туса панă, тет Микка.

Халĕ айванха вăл тухтăр—ăйăрпа кĕсрене те уйăраймасҭ, куԓтурă револютси пулсан ăсланĕха.

### Хосакасси Соломонĕ.

Соломон патша авал хăйĕн ăсĕпе мухтава тухнă. Анҭах ун пек патша ăсĕпе халĕ епĕр вăй çитвĕ таран кĕрештепĕр.

Хосакасси (Çĕрпÿ р.) йалкаваш çекреттарĕ Ентри Ийванҭă иртнĕ çулта хăй аҭиве «Май» тесе йат панă (пупсăр мĕнсĕрех). Кăçал темĕн шухăш кĕнĕ тата Ентрийе: пупа илсе килсе аҭиве тепĕр йат панă.

— Аҭиве Май йатлах хурас, тет Ентри.

— Май йатлă çветтуй çук. «Майран» Матви тăвас.

Çапла вара Ентри Ийванҭа пуп пĕрле йышăнă постановлени тăрăх, Май йатлă аҭа Матви пулса тăраҭ.

Пит ăслă тунă. Авалхи Соломон Хосакасси Соломовĕнҭен 500 километр хушши кайарахра тăтăр.

### Нормă пысăк.

— Туса пама пулнине миçе çул кĕтме пулаҭ?

Йĕлĕхри нормăпа 1 çул кĕтмеллеҭҭĕ, халĕ... Ассакасси вулĕçтăвкомĕпе Вăрнар райĕçтăвкомĕ вăл нормăна пысăклатнă. Кĕç-вĕç йатăнса анас пек ларакан (айаккисенҭен тĕкĕлесе пĕтернĕ) Мăнйал шкулне Ассакасси вулĕçтăвкомĕ пĕлтĕрех йусаса пама пулнă, халĕ те йусаман. Райĕçтăвкомрисем татах тепĕр çула хăварасшăн. Нормăсем улшăнмалли вăхăт çав халĕ.

### Паха вулакансем.

Ҭăваш республĕкĕнҭи сутйесене кĕнеке макаçăнĕ пуçлăхĕсем тунă—вĕсем суг та тăваççĕ, суту та тăваççĕ. Маттур сутаççĕ вара, 3 çулта кашнийех 10 кĕнеке сутнă. Кĕнекисем пĕтĕмпех, йалсовет кăларнисем мар, Ҭăваш Иуçтитси Комиссариаҭĕ кăларнисем. Çав паха уçрештени кăларнине аса илсе, вуласса та кĕнекисене ахаԓ çынсем мар, шăписем вулаççĕ сут çурҭĕсенҭе. 3 çул ĕнтĕ вулама пуçлани, çапах вуласа пĕтереймеççĕ, мĕншĕн тесен шăшипи тени çемçерех апата йуратаҭ, хыт апата йуратсах каймасҭ. Хресҭенсем пимеççĕ пулсан, мĕншĕн кăлараççĕши шăшисемшĕнех çав хаклă тăракан кĕнекесене? тесе тĕлĕнеççĕ кушаккисем.

Иуçтитси Комиссариаҭĕ хăй пÿгшеҭĕ çинҭе кăçал та çавăн пек кĕнекесене çапма укçа ыйтаҭ пулас. Пара-

сах пулаҋ. Вара, анҭах кĕнекисене вырнаçтарма сутсем вăҭҭи çĕнĕрен склатсем тума та манас пулмаҋ.

Атакуй.

### Сĭессен çуртĕнҭе.

— Неушлĕ ловĕттĕ?

— Ловҭу.

Çавăн пек кĕске калаçу илтме пулаҋ (Атăл хĕрринҭе пулă тытнă çĕрте мар) Сĭессен çуртĕнҭе, йалсенҭен, районсенҭен канашлăва килнĕ йулташсем хушшинҭе. Хăнасем пыйтă тытаççĕ тумтирсем çинҭен. Хăнисене пысăкрах хисеп тăвас шухăшпа ши пыйтăсене самăртса йанă, йышĕ тесен вара çав тери ăнăçуллă ĕрҭенĕ. Вырăн çине сĕртĕнме çук, сырăнса илеççĕ сапа та, ăшăлантараççĕ анҭах, аллусем пĕрехмай ĕçре вара. Çименнине урамра та памăсланмаççĕ, мурсем! Çапур çумне тăратса леш на-рр-ăхх! текенни пек хăтлантарма та хатĕр. Фискуҭтурă сывлăха çирĕплетекен йапала тенине илтнĕ те еп, анҭах кун пек хормисемпе килĕшместĕп. Çавăнпа çав Сĭес çурҭĕн пуçлăхне фискуҭтурă çинҭен урăхла шухăшлама вĕрентмелле. Кирлĕ пулсан тен пыйтăсене пĕтерме вĕрентекен курса йамалла пулати.

«Ҭ у х л а н ă ç ы н».

### Вăрра тытмали мел.

Войĭаксен оплăçĕнҭе пурăнакан ҭăвашсем вăрра ак мĕнле пĕлеççĕ:

Кĕçĕн-Шупăр йалĕсенне çырма хĕхĕрĕнҭи катаран пушăт касса кайнă. Кам касниве пĕлме йал куштанĕсем çав касса кайнă пушăт патаккисене пĕр çĕре çыхнă та, çавăн урлă пурне те каçма хушнă. Каснă çын каççан, ҭирлет те вилет пулаҋ. Ытах вилес килмесен, халăха пĕр ҭетвĕрт «кумушкă» ĕçтерсен, ҭĕрĕлме те пултараҋ вăл çын, тет «Çӳлĕту».

Тухтăрĕ те кирлĕ мар — ҭирлеттерме те, ҭĕртме те пултараççĕ куштансем. Сывлăх пайĕ айакра тăтăр!

### Тинĕс шапи.

— Йал промышлĕннăçне ӳстереп, тет вара Йаракасси йалканаш претçетаттĕлĕ.

Ҭăнах та, йал промышлĕннăçне те ӳстерет вăл, халăха çутти патне те кăлараҋ.

Алим йатлă йалкор ак мĕн çырса пĕлтерет ун çинҭен:

Йаракасси (Йетĕрне р.) йалканаш претçетаттĕлĕ милитси туртса илнĕ аппаратсене йалти сăмакунщĕксене сăмакун йухтарма параҋ. Йухтарнăшăн çур пулштух сăмакун, тата пăракă илет. Çавна кура Йаракасси сăмакунщĕкĕсем çапăнса вилессе пĕлмесĕр сăмакун йухтараççĕ, тет.

«Капкăнăн» 15-мĕш номĕрĕнҭе ӳкернĕ сăмакун тинĕсĕ Йаракассинҭе ҭас типес çук. Йалканаш претçетаттĕлне кăларсан типессĕн туйăнаҋ те ,анҭах типĕре вилсе кайĕ вăл. Тинĕс шапи ăратти те вăл.

### Пулăçă.

„Йӳç пăрăç“ çыраҋ:

Алкеш йалĕнҭи (Шупашкар р-нĕ) Караç Лекçейĕ пулă тытма аван пĕлет. Çынсем уйра тырă вырнă ҭух, Караç Лекçейĕ атма йатаҋ те, никамран ыйтмасăрах, пулăшу комитетĕн кӳллинҭен пулă тытаҋ. Тата каçпала та вăл шакă лартса пулăшкомăнне пулă сăптăрса лараҋ, тет.

Ларасса лараҋ те... лармаллипех лараймасҋ çав. Ыйтамха сиртен: пулăшком сирĕн миçе тĕлĕв кураҋ талăк хушшинҭе?

---

### Вăрнар Вăрмар.

Вăрмарти пуҭтă уйрăмĕн пиҭеҭĕ ак çапла:




Ку пиҭет тĕрĕх çав пуштă уйрăмне шырас пулсан, вырăсен Вăрмара (Урмары) каймалла, ҭăвашсен Вăрнара (Вурнары) ҭуптармалла. Тутарсемпе мăкшăсен ăçта каймаллаши тата — Çĕмĕрле станцийнеши?

# Пирĕн самокриттĕксем.

*ВЕРĂ ИШЕЙĔВĂ ÿкерт̆ĕкĕ.*



— М... м... пĕлетпĕрха епĕр вĕсене... мĕншĕн тытмаллине... Саветушђи ĕçет, самеçтиттĕлĕ ĕçет, сторăшĕ ĕçет...
— Тытăпăрха вĕсене!..
— Конешнĕ тытатпăр... Тултарха тепĕр стаккан.

# Ђ а р у с ă р.

Иалканаш претçĕтаттĕлне лекме çăмăл ĕç тетрим? Асту, çăмăл сана! Сасартăк претçетаттĕле суйламаççĕ: малтан ху ĕçђенне, ху ăсна, ĕçлеме пултарнине кăтартас пулат̆. Иалçыннисем сан ĕçленине курсан çеç сана ун пек ответлă вырăна лартĕç. Анђах хăшĕ-пĕри апла шухăшламаççĕ, халăх суйласса кĕтха, кĕтсе ывăнăн, теççĕ те урăх май тупаççĕ.

Упаç-кассинђе «интереслă ĕç» пулса иртет. Петĕр Иекорăв унта çыруçă пулса ĕçлет. Ђылай вăхăт кĕтет вăл:

— Хăçан мана претçетаттĕл тăвĕçши?—тарăхат̆ вăл хутсем çырнă ђух.— Иепле çаклапас претçетаттĕле?

Пĕлтĕр кив претçетаттĕле хут нађар пĕлет тесе вырăнтан кăларђĕç, суйлав вăхăтĕнђе Петĕр Иекорăв та ђлепа çакланат̆.

— Пĕр утăм пулђĕ, тет вăл савăнса.

Ђленсен хăйсен хушшинђен претçетаттĕл суйламалла, анђах пурин те асла пулас килнипе, малтан никама та суйлаймаççĕ.

Иекорăв çывăрмаст̆, вăл никампа килĕштермесĕрех „хăйне хăй суйласа“ претçетаттĕл—Йекорăв тесе алă пусма тытăнат̆.

— Сана кам суйларĕ? тесе ыйтсан вăл тилмĕрсе пăхăт̆ те:

— Есĕр суйласса кĕтсен, нихçан та пулас çук, кĕтме вăхăт çук, тет.

— Çыруçă кирлĕççĕ пире, ес хăнăхнă вăл ĕçе, теççĕ ыттисем,

Çаплине çапла пуç теха вăл, Иекорăвăн çыруçă пулас килмест: шалу сахалтарах.

— Çыруçăра нумай ĕçлерĕм, йăлăхтарçĕ, тет вăл.—Претçетаттĕл пулас терĕм.

— Ну, йурĕ ĕнтĕ, йурĕ, ĕçле, теççĕ ытти çленĕсем аптăраса.

Иекорăв «ĕçлеме» тытăнаť. Пукрав праçникĕ çитрĕ. Ĕлĕкхи йăлапа (такçан пĕтĕмши çав ĕлĕкхи йăла?) халăх „престол праçникĕ" тесе ĕçме тытăнаť. Иекорăв ыттисенçен кайа йулмасť. Иал пуçлăхĕçкĕха вăл!

Ÿсĕрĕлсен кăшкăрма тытăнаť.

— Ей, килха кунта, шиvă-ă!—кăшкăрса илет вăл урамра йалисполниттĕлне курсан.—Çупса кил, уруна купарçана тивертсе.

— Мĕн тумалла?

— Айта çавăт мана, ура утмасť. Киле ăсатса хăвар. Иал пуçлăхĕ еп! Пĕлетни ес çавна?

Иепле пĕлес мар, пĕлеççĕ, конешнă. Çавăтса леçсе хăвараççĕ. (Леçмесен хуптаратăп тесе хăратаť).

Комсомолĕссене курсан çўç-пуç вирелле тăраť вара унăн, вĕсемпе хирĕçме тытăнаť.

— Сирĕн ĕçме те çук, çиме те çук, епĕ ĕçлеп те ĕçеп те—вăт йепле пурнаççĕ ăна... М-м олоккососсем!!!—вăрçаť вăл вĕсене.

Комсомолĕссем вара аптăранипе пуçĕсене пăркаласа иртсе кайаççĕ—ÿссĕр çынпа калаçса сайа йаритçен...

Сăмакун йухтарма çармасť. Тăвасса тăвăр та, ан лекĕр, тесе вĕрентет вăл çынсене.

Вăрлăх илме çухăнсем вайçи укçа килçĕ. Иекорăв, хăй ăссĕн, вĕсем тўлеймеççĕ, тесе вĕсене килнĕ укçана пуйансене салатса йаçĕ.

Çапла вара çухăнсенçен нумайĕшĕ акмасăр йулçĕç, пуйансем ăна тав турĕç. Налукпа страховккă укçине пухвă çух та, Иекорăв ĕçтерекенсене çкоттă параť, пуйанне çухăнне пăхмасť. Сăмахран, йалти çи пуйан çынăнне, Романăвăнне, çакарнă, çухăн Иаккăвлĕвăнне пĕр пус та çакарман. Хăйĕнпе калаçма та памасť. Претçетаттĕле кĕме ахаçтен тăрăшман çав вăл.

Иал çутталла туртăнаť, Иекорăв ĕçме çеç пĕлет. Тимитрийĕв й-шпа Иаккăвлĕв (акроном) й-ш каласа ăнлантарнă хыççăн, йалти çухăнсем хире çĕрулми лартса, ăна Сĕнтĕрвăрринçи çпирт савăтне леçме токăвăр тунă.

Иекорăв çакна илтсен, çынсене пăтратма тытăнаť:

— Тимитрийĕв мĕн пĕлет вăл, укçашăн кăна ĕçлет вăл, (леш тўррипе каласан нимле укçа та илмен, вырăнтан вырăна куçса çўрекен шкулта ĕçлет вăл). Есĕр хире çĕрули лартсан пĕр пăт вырăнне çĕр пăт тўлеттереççĕ, тупса параймасан выçăхсене сутаççĕ, ан хăтланăр, пăрахăр вăл киревсĕр шухăша, тесе ĕçе çарса хураť.

Иалти активиссем тăрăшнипе Нăрат кивçенлĕх йулташлăхĕнçен 13 плук илсе килçĕç, анçах Иекорăв унта та темĕн те пĕр калаçаť:

— Плукпа сухаласан тырă наçар пулаť, ан хăтланăр, плук анана пăсаť вăл, тесе супăçтетет...

Епир халиçен плук анана пăсаť тенине илтменçĕ, йурăхсăр претçетаттĕл совет ĕçне пăсаť, тенине илтнĕ.

Сĕлтĕрмен.

---

## Татăк пўрне.

— Мĕнле сирĕн йалти Иосак Еккимĕн пўрни татăк, тет мари?

— Татăк.

— Мĕнле çăкăра тытса çикелет?

— Çăкăра мар, çынна та тыткалаť... хĕртнĕ çĕрте.

Майпăран.

## Çыхăну.

— Сирĕн комсомол йаçейкки Хĕрлĕ çара кайнă çынсемпе çыхăну тытаťи?

—Çыхăну лур. Лайăх тытатпăр çыхăнуне. Ернесерен çыру çўрететпĕр. Унăн савни Варвари пулнă. Вăл кам хусахĕпе çўренисене пĕлтерсе тăратпăр.

## Шкулта.

Уçитлĕ. Вĭт, Ваççилийĕв, есĕ политтĕкпа маçтăр тесе мухтанатăнççĕха—хаçхи вăхăтра тĕнçе мĕнпе пуйан?

Ваççилийĕв: Машшинпа.

Уçитлĕ: Пĕлеймерĕн. Нуккă, Петров?

Петров: Пў-ро-крат-ти-сăм-па.

Кимĕ.

# Кĕрешӳ кампани.

Иалсоветĕсен ерехле котовой отчот.

Пухăвĕç 3—4 йал претçетаттĕлĕ хăйсен кулленхи ĕçĕсене йавса сӳтме. Так йаваççĕ те, так сӳтеççĕ. Вĕçĕ хĕрри те çук. Преми илесшĕн кĕрешеççĕ.

— Кунĕн-çĕрĕн çеç мар, ерни-ерниле кĕрешетпĕр, ытти ĕçсене мансах



ĕçлетпĕр, тет Чăвашулмалуй (Куславкар-нĕ) йалканаш пуçлăхĕ Иван Çмирновăн çекреттарĕ—Хĕвĕя Пэчук Михалли.

— Правăчнă, Михача тĕрĕс калаť... Çине тăрса кĕрешетпĕр, хаçат çинче



калана пекех, тет претçетаттĕлĕ.

Шутлама тытăнчĕç. Малтан претçетаттĕлĕ калаť:

1) Çуркунне, йал хуралĕ тытнă чух, кĕрешекевсен 2 четвĕрт сăмакун илтĕмĕр.

2) Çуркуннех, ерехле, пуйансене çуртри вăрлăхĕ валеçсе патăмăр. Вĕсем Иакку Михалине хушрĕç те, вăрлăх йакăлттин анчах Сĕнтĕрвăрри пасарне вĕçрĕ.

3) Йалти Улмалуйĕнче Çтаппан Михалтăн пушă çуртне савăтпа пĕрех ерех паракан турăмăр. Хам кумана Ичун Ахвавеçне сăмакунла сутма хушрăм та, пĕтĕм пулăшком фонтне, çурчĕ-мĕнĕпех, сутса йалканашне мăнкун туса пачĕ. Ку пачшуй тоçтишенк —хам кĕсйерен пĕр пус та тухман—ернипе праçнăк...

— Çук йапаларан пур тăвасси, пуррине çук тăвасси.. Вăрланă йапалана вăрламан тăвасси—шатах пирĕн ĕç, пурне те ăста. Пурне те çутти урлă тăватпăр, терĕ те, Хĕвĕнӳк Михалĕ отчотла пуçларĕ. Акă, терĕ:

1) Тихăн арăмĕнне Телей Хриттунĕ ыраш вăрланăччĕ. Миххи шăтăк пулнă пирки йĕрлесе тупсаччĕç... йĕрĕ çиве сăмакун сапса тухрăмăр та, йĕрĕ те пĕтсе ларчĕ. Мĕн вырăнсăр сутпа муталашас—сатту Хриттун патĕнче çĕр-çĕрĕпе ĕçрĕмĕр... Ай, кĕрешрĕмĕр теçке!.. Кĕркури Михаллине çапсах пăрахаттăмăрччĕ, чӳречисене ерех кленчипе саратпăр. Пулни камит пулчĕ...

2) Епĕр лаша картăчкисемпе те патшалăха усă тума пĕлетпĕр. Иртнĕ çуркунне пухрăмăр та—пĕр 3-шне тутарсем йеннелле ăсатрăмăр... Укçа та, ĕçкĕ те пур.

— Çапла епĕр пӳтшет тăватпăр, пĕтĕм Чăваш респуплĕкĕпе пирĕн çине пăхса ĕçлеме вĕрентес пулаť, колоссоваť тăватпăр...

### Çĕрпел отчочĕ.

Опитнă пек туйăнса кайрĕ Çĕрпел йалканаш пуçлăхве—Полеккова.

— Как етă так?! Епĕр, Вăрнарпа Елĕк районĕ, Куславккасенчен чэплăрах. Пире 1-мĕш вырăн памалла, преми...

— Пире хак хумаççĕ, чысламаççĕ.— Сăмакун тымасť, теттĕр.. Каккуй тыт-



маст? Ђелăй аппарат 5—6 тыгатпăр, тата ĕçессе те ик алăпа тытса ĕçетпĕр... тет хĕрӳлĕ саспа. Канашлурах ђетвĕрте ӳпĕнтерсе кăтартма хатĕр.

— Епĕр Куславккасем пек çеç мар —çине тăрса кĕрешни што вăл?! Епĕр акă тӳрех çăвара тумлатмалла тунă...



Кĕрешӳпе ӳксессĕн те, çапах кĕрешме, çавăншăн ђун пăма хатĕр.

1) Екковоми тăватпăр. Ађђа пасарве лав тытса кайса çутти кӳрес вырăнне, хамăр йалта савăт уçтартăм. Савăт—хам çумрах, кӳрĕшре Иермей Каралейĕв лаççинђе. Лаççа кайатăп та, тӳрех, аппарат айне ђĕлхеме лартатăп. Ай, утопнăçке. Киле те пĕрер путылккă парса йараť.

2) Унтан, Каралейăвăн сахалрах тесе, Антун Елекçине аппарат лартартăм. Вăл ерехпе ленкрĕ те, хутве хам алла çавăрса илтĕм те, аппарат сутран çăлăнса йулђĕ. Топавăђнăй ĕçетпĕр.

3) Çтенкки Павăлĕпе Ђађăка каçунни ерех илсе килсе шывпа хутăштарса сутма вĕрентсе... Çĕнĕ наукă.—Хамăрах изопретаттĕл.

4) Куçма кулак сăмакунне пылпа хутăштарса параť, çавăнпа самоопloшени тӳлеттерместпĕр.

5) Мăнтăркка пуп та сăмакун йуратаť, унăн саппанĕ айне тăрса ĕçрĕм. Çавăнпа пупа хăй ӳстермен сат пахђинех, вăл ӳстерђĕ, тесе ĕнентерӳ шартлаттарса патăм.

— По вçем фронт попетă, Полекков й. премин кĕтет, тесе пĕтерђĕ Çĕрпел хуçи хăй огђотне.

Ытти йалсоветђĕсем те кĕрешеççĕха. Хăшĕ çине тăнă, хăшĕ айне выртнă... Огђотсене татах итлĕпĕр терĕçха. «Капкăн» вулакансем, хăшне мĕнле премин памаллине йавса сӳтме хатĕрленĕр! ВАÇАНККА.

---

## Лайăх çыпăçтарнă.

— Паллах, пирĕн халăхсутйи сем слесăртан пулнĕскерсем.

— Ма, апла?

— Питĕ хытă çыпăçтарса хуђĕç мана икĕ çула. Кассатси те парса пăхрăм, вăл та пулăшмарĕ. С—в.

## Хастарлă хула çынни.

— Кăмантировккăна кайатăн-и мĕн, Васил Васнлђă, капла отейаласем минтерсем йатса? Мĕншĕн васа хирĕç кайатăн тата кăмантировккăна?

— Çук, Петĕр Иванђă, кăмантировккăна мар. Çăкăр ђерсђĕ йышăнма кайса выртас терĕм лавкка çумне.

Коркоп ђленĕ.

## Хăпартрăмăр.

— Епĕр Карппăва хăпартрăмăрха.

— Ма хăпартрăр ун шалуне?

— Çук, шалуне хăпартман. Хăйне хамăр кооператтивран вулăçрине куçарса хăпартрăмăр.

— Ех, шулĕк вĕт вăл...

— Çавăнпа çав ĕнтĕ—хамăр кооператтивран урăх ан вăрлатăр, терĕмĕр.

С—в.

---

Калуша улăштарса кайакансем пур, çăпатана улăштарса кайакансем çук, ăса улăштарса кайакансем ђ ы л а й вара.

## Тишкерӳ кампанинђе.



**Претçетаттĕл**: Ĕлĕк çак кĕпе çухави аран çитеђĕ, вăн халĕ пушă, виçĕ пӳрне те кĕрсе кайаţ. Самокриттĕкран хăрасах наţарланса кайрăм.

## Кĕђкей выљăх масарĕ çинђе.

Кĕђкей (Сĕнтĕрвăрри р.) йалканаш çыруçи Кутрешшов Çемен хăйĕнне налукран 1 ĕне пытарса хăварнă, Мускав Ваççин пĕр сыснине пытарнă. Й. (çелкор).

**Кутрешшов** (ĕ н е н е туртса):—Е, шуйтан ĕни, мур илсе кайасшĕ! Туртап, туртап... Çаплах...

**Маскувски Васса**: Е-й, Çемен мари çак ес? Мĕн унта măкăртататăв? Леш налук çпискинђен тухса тарнă ĕнӳ мари ку?..

**Кутрешшов**: И у р ĕ. Ес ан шарла толђккĕш. Ку ĕнене çавах пусмалла халех, пытарсах хăварасха, терĕм. Есĕ тата мĕн унта?

**Маскувски**: Çук-çук!.. Епĕ те çав майпах сан хыççăн килтĕм. Сыснине ерех сыптартăм, çапах шăтăка тӳрех кĕртмелле мар, есрелĕ. Есĕ пулăшмăнши пытарма? Хăна та маьмăп, акă пĕр пулштух (тыттараţ).

**Кутрешшов**: Кӳр еппин, иккĕшне пĕр шăтăка йарар. Майлар пĕрре май килнĕ ђухне, хамăр пуçлăх ђухне... Анђах пĕр услови—кайран сыспин ђĕрине мана çитер вара.

Çапла икĕ ĕçлĕ çын майларĕç пĕр ĕçе. Иккĕшĕ те тутă, иккĕшин те пур: пĕрин сысна, теприн ĕне налук çпискинђен тухса тарђĕç, çпискă çине халĕ те тавrăнманха. Лайăхах пытарђĕç курнаţ.

---

## Пуçа кĕнĕ шухăшсем.

Хаљхи вăхăтра пуçлăхсем нумай пирки хăшпĕр çынсен сторовă тусах картусĕсем çĕтĕлсе кайаççĕ.

---

Шăшисемпе кĕрешме никам та шăшийе хушакан çук (кушака хушаççĕ), пӳрократисăмпа кĕрешме пӳрократах хушни ђылай пулкалаţ.

---

Токлатне никам та итлемест пулин те, токлађĕ пĕтсен пурте алă çупаççĕ, мĕншĕн тесен киле каймалли вăхăт çывхарнине сисеççĕ.

---

Отђотпа машшинисткăсем хушшинђе ăрасналăх ђылай: машшинисткăсен тумтирĕсем кĕскелсех пыраççĕ, машшинисткăсене пиђетлеме хушнă отђотсем вăрăмланса пыраççĕ.

---

Турра ĕненменсен сойусĕн ĕçлемелли нумайах йулмарĕ ĕнтĕ—ĕненмен çынсем нумайлансах пыраççĕ. Турра мар, отђота та ĕненми пулђĕç хăшĕсем.

---

Суйлаврa местком претçетаттĕлне лекрĕн пулсассăн, суйлав умĕн ытлашши нумай ĕçлемелле пулнăшăн ан хуйхăр,—кайран çулталăкĕпех канса пурăнăн.

---

Шкула кĕме ексамĕн тытаймарăн пулсан, килтисене: виçе çитеймен пирки илмерĕç, тесе кала.

# Шурă çăнăх.

Шур çăнăх тесен халĕ камăн сĕлеки йухмĕ! Çуркуннеренпе шур çăнăха курнă-курман пекех пурнатпăр.

Пире, ҫăвашсене, хура çăкăр тăраниҫҫен çимелĕх пулсан пит аван вара. Шурă çăнăх çуккишĕн макăрас çук.

Шур çăнăх çукки—тутлă çисе йӳçĕ ĕçме вĕреннĕ йака карланкăллă çынсене анҫах канçĕр.

Ун пеккисен, карланкисене ытараймасан, ирĕклĕ ирĕксĕрех шур çăнăха шырама лекет.

Хăшĕ-пĕри пит шырамасăрах тупаççĕ.

Çакăн пек телейлĕ çынсенҫен пĕри „Иетинствă“ хапрĕкĕнҫе тиректăрта пурнаť. Вăл—Курăҫкĕн йулташ.

Унăн шур çăнăх алли айĕнҫех.

Çуркунне çăнăх пĕтсе пынă вăхăтра кăна çăнăх кирлĕ пулнă мĕн.

Хапрăк çумĕнҫи копперативăн претçетаттĕлне: пар мана çăнăх, тет.

Леш нумай шухăшлаcа туртăнкаласа тăмарĕ—çыраť те параť Курăҫкĕна хут. Хуҫĕ çинҫе—копператтив прикашҫĕкне хапрăк тиректăрне саппас тытса тăракан первăй сорт çăнăхран 3 пăт пама хушаť.

Курăҫкĕна тата мĕн кирлĕ—кайаť, илет, «виçĕ пăт çăнăх илнĕ» тесе алă пусаť.

Çитменнине, «пысăк карап пысăк шыва йуратаť» тенĕ пек, Курăҫкĕн йулташ копператтив лавккинҫен тĕрлĕ тавар нумай укçалăх кивçен илсе пынă.

Хăш уйăхра 200 тенкĕ йахăнҫенех кивçенленнĕ.

Çавăнпа пĕрлех рапоҫҫисене, копператтивра укçа ытлашши çуккипе, уйăх хушшинҫе укçасăр нумайран 10—15 тенкĕлĕх параççĕ.

Çакăн пеккисем çинҫен пĕрре сопранире калаçкаларĕç.

Копператтив претçетаттĕлĕ ку сăмахсене хирĕç.

— А есĕр мĕн пĕлеттĕр, тӳрех курнаť—есĕр сутуилӳ ĕçне пĕлменни, терĕ.

Вăт, мана копператтив ваҫҫи укçа кирлĕ—епĕ кайатăп та илетĕп Курăҫкĕнран кирлĕ таран, а парас мар ăва çăнăх, вăл та мана пулан ҫух укçа памĕ, терĕ.

Анҫах çак ĕç кунпа пĕтмерĕ....

Сопранире калаçнă сăмахсене илтсен, Курăҫкĕнăн ҫĕри пит хускалса кайнă.

— А, есир апла-и? Епĕ сире кăтартăп! тет.

Хăйпе пĕрле пулнă Пăнтелей Çтеппанҫ пухалтĕрпе кăшт суттине сыпкаласа илеççĕ те, веçтереççĕ стантса «кăтартма».

Çитрĕç, иккĕшĕ те, иртсе кайакан правус пек пашкаççĕ. Кĕҫĕç копператтив лавккине.

— Шур çăнăх пури? тет Курăҫкĕн прикашҫĕке.

— Çук, тет лешĕ.

— Иепле çук, претçетаттĕл мана виçĕ пăт пама пулнăҫҫĕ, тавай пар, тет Курăҫкĕн.

Лешĕ: ман çăнăх пурĕ те 43 кило, ăна та, шурă çăнăх кирлĕ ҫирлĕ çынсене паркалама анҫах хăварнă, тет.

— „Парсамах“! тет Курăҫкĕн, епĕ хам та, копператтива укçа кирлĕ ҫух, пĕр ҫарса тăмасăр паратăп, тет.

Тем вăхăт çапла, прикашҫĕке çăнăх пама çавăрасшăн иккĕнтен кĕрлесе тăҫĕç.

Леш—хутте пусĕ çинҫе шаҫҫа шĕвĕрт—памастăпах тет.

Çиленсе çитнипе Пăнтелей Çтеппанҫă: а мĕн пăхса тăран ăна, Миххал Луккиҫ, кĕр те ил! терĕ.

Леш—кĕрет те çăнăх миххине туртса кăлараť.

Çăнăха хăйсемех виçеççĕ те йурлайурла илсе кайаççĕ.

Прикашҫĕкĕ пăхса тăрса йулҫĕ.

А ес тиректăр нимĕн те мар тетĕн. Тиректăр тиректăрах çав. ХУРИ

# Пуштă йешҫĕкĕ.

**Е. И. Ананйĕва** Есĕ çыратăн: В. Б. Кошелейа есть духовой священство которой не Разрешаю т. член семи а они как он сам. Владыкам. Архерей просьвешает, Попов а именно член семи не правильно»... Нимĕн те тăнланмалла мар. Вырăс пулас терĕни?

**Майпăрана.** Есĕ çывăрнă ҫухне Мĕтри йытти алăкран кĕрсе çăкăр çисе кайни çинҫен çырни кĕреймерĕ. Ма хăваламарăн?

**Пăлтăра.** Тăлăх аҫана хĕсĕрлеççĕ тетĕн. Санăн «тăлăх аҫи» 20 çултан та иртсе кайнăçке. Мĕнле хĕсĕрленине те кăтартман. Тен ăна улаха кӳртменшĕн кĕвĕçетĕн есĕ?

# Тырпул уйавӗ умӗн.



**А р ӑ м ӗ:** Еккин, мӗн ҫын картине йусан. Ҫын картине йусаса пӗтерес ҫук есӗ, хӑйсенне хӑйсем йусаҕҕӑр.

**У й х у р а л ҫ и.** Ҫук йусамастӑп, сӳтетӗп. Выҕӑхсем тухҕӑр теп. Ыран пасара кайма укҫа кирлӗ.

Зам. отв. редактора **П Петров.**

Чувашлит № [redacted] Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Нап. 1500
1161,